28-19

ЙЕВКРАФӐВА

# АПАТ-ҪИМӖҪ ХАТӖРЛЕС ӖҪ

ҪӐВАШ КӖНЕКИ УЙРӐМӖ КӐЛАРНӐ
Шупашкар—1928 ҫул.

П. ЙЕВКРАФĂВА

# АПАТ-ÇИМĔÇ ХАТĔРЛЕС ĔÇ

ЧĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ КĂЛАРНĂ
Шупашкар—1928 çул

Типография
«ЧУВАШСКАЯ КНИГА»
Чебоксары. Чувашская 6

Чувашлит № 202 Зак 520 Напечат. 3000 экз.

## Апат-çимĕçĕн усăллăхĕ.

Пирĕн ђăваш респуплĕкĕнђе виç-тăват тĕрлĕ халăх пурăнаť. Пуринђен нумайĕ ђăваш, вырăспа тутар та пайтах, ирçе те пур. Çав виç-тăват тĕрлĕ халăхран хăшĕ имшерккерех те, пĕђĕкрех та, хытканрах? Кунта нумай шухăшласа тăмалли çук.—Кам имшеркке те хыткан пултăр?—Çав пирĕн ђăваш ĕнтĕ! Имшерĕпе те, хытканĕпе те килĕшĕттĕмĕр, анђах имшер çыннăн вăйĕ те имшер, ĕçĕ те хăйне кура кăна, ĕмĕрĕ те кĕске. Вăйсăр çын тĕрлĕ ђирђĕрпе те лайăххăн кĕрешеймест, ђирĕ ăна ђасах пусмăрласа илет. Çавăнпа вăйсăр халăх вилессе те вăйлă халăхран ытларах вилет.

Ђăнахах та пирĕн ђăваш çулсерен тĕрлĕ ђирпе ытти халăхран ытларах вилет. Сăмахран ђаххуткă ђирне илер. Пĕтĕм Раççейре çулталăк хушшинђе пин çын пуçне 14 çын

ҫаххуткӑ ҫирӗпе вилет. Ҫав ҫаххуткӑ ҫирӗпех пирӗн ҫӑваш ҫулсерен пин ҫын пуҫне 35-шер вилет.

Мӗншӗн ҫав ҫаххуткӑ ҫирӗ пирӗн ҫӑваша ытла вӗлеретши?

Йегӗрне хулинҫе ӗҫлесе пурӑнакан ҫаплӑ тухтӑр Волккӑв пирӗн ҫӑваш халӑхӗ ҫинҫен тата акӑ мӗн калаҭ: Епӗ темиҫе тӗрлӗ халӑх хушшинҫе ӗҫлесе те, ҫак ҫӑваш халӑхӗ пек вар (ӑш) ҫирӗпе асапланакан халӑх курман, тет.

Мӗншӗн пирӗн ҫӑваша вар ҫирӗ пит аптӑратаҭха?

Ҫӑваш халӑхӗ ытти халӑхсенҫен вӗтӗрехӗпе имшерлӗхне ҫулсерен салтака кайма йат тухнӑ аҫасен виҫисем кӑтартса тӑраҫҫӗ. Сӑмахран, иртнӗ 1927 ҫул йат тухнӑ аҫасене пӑхӑр!

Пирӗн ҫӑваш аҫисем мӗншӗн ытти халӑх ҫамрӑкӗсенҫен лутрарах та, ҫӳхерех те, ҫӑмӑлтарах та!

Ҫаххутнӑ ҫирӗпе пирӗн ҫӑваш ҫуллен ытти халӑхран ытла вилни те, вар ҫирӗ ытлашши пусмӑрлани те, пирӗн ҫӑваш ытти халӑхран лутрарах, ҫӳхерех, ҫӑмӑлтарах, вӑйсӑртараххи, пурте *пирӗн ҫӑваш таҫантаннах наҫар апат ҫисе пурӑннинҫен килет.*

**1927-мĕш çулта йат тухнă çамрăксем:**

| Вырăс. | Ирçе. | Тутар. | Ђăваш. |
|---|---|---|---|




| Йывă-рăшĕ: | 65 кил. | 60 килокрам. | 59 килокрам. | 57,8 килокрам. |
|---|---|---|---|---|

Ҫыннăн сăнĕ-пуҫĕпе пĕвĕ мĕлкине те, сывлăхĕпе вăйне те, пурне те епĕр ҫийекен апат тăватť.

Уҫă сывлăшра питĕ нумай ĕҫлени анђах пире вилсе пĕтесрех ҫăлатť. Ҫав нађар апатпа, сăмахран, хапрăк-савăтра ĕҫлес пулсан, пирĕн ђăваш такҫанах вилсе пĕтмелле.

Кирек мĕнле ђĕрђун та апатсăр пурăнма пултараймасť. Ăна епĕр пурте лайăх пĕлетпĕр. Анђах етемшĕн мĕнле апат усăллăраххине, ăшра вăл мĕнле майпа вăйа кайса тăнине нумайĕшĕ нимĕн те пĕлместпĕр. Пурăнасса та епĕр суккăр ҫын вăрманта аташса ҫӳренĕ пек анђах ҫапкаланса пурăнкалатпăр. Апатне те мĕн ҫакланнă ҫавна ҫийетпĕр. Ҫийекен апат пирĕн ӳтпӳ сывлăхĕшĕн мĕнле пахине пĕртех пĕлместпĕр. Ăна лайăх пĕлсен, епĕр те апат-ҫимĕҫ ҫинђен каллĕ-маллĕ шухăшлакаласа пăхăттăмăр. Халĕ епĕр: — Пире арпа лаҫҫи тултăр! – тетпĕр.

Етем ăшђикки арпа лаҫҫи пек мар, вăл пĕр ђарăнмасăр ĕҫлесе тăракан пăс машшинĕ йевĕрлĕ. Пăс машшинĕ ĕҫлетĕр тесен, ăна вутти те, шывĕ те кирлĕ. Вутти ҫуннипе хуранти шывĕ вĕрет. Вĕренипе пулнă шыв пăсĕ ниҫта

кайса кĕреймесĕр машшинăн кустăрмисене çавăрат̆. Вара машшин ĕçлет. Мĕн ђухлĕ вуђĕ хĕрӳллĕрех çунат̆, машшинĕ те çавăн ђухлĕ вăйлă ĕçлет.

Пирĕн ăшђик те çав пăс машшинĕ пекех ĕçлет. Ђĕре татти-сыпписĕр вăйпа тапса тăрат̆. Вăл тапнипе йун тымарĕсем тăрăх п̣ĕтĕм ӳттире йун çӳрет. Ӳпки пĕрмай вĕрсе тăракан вĕркĕђ пек, пĕрре сарăлса, тепре пĕрĕнсе сывласа тăрат̆. Пĕрĕннĕ майпа ăшри пăсăлнă сывлăша вĕрсе кăларат̆. Сарăлнă майпа тулти лайăх сывлăша шалалла туртат̆. Хырăмлăхĕ те ахаљ тăмаст̆. Вăл епĕр çинĕ апата çĕнĕрен пĕрĕнтерсе, кирлине йуна йарат̆, кирлĕ маррине пыршă тăрăх кăларса пăрахат̆. Тата çыннăн урисем утаççĕ, аллисем тĕрлĕ ĕç тăваççĕ, пуçĕ те шухăшлат̆. Çак ĕççене тума тата хăйне вăй кирлĕ. Вăйа кăларма апађĕ кирлĕ. Мĕн ђухлĕ апат лайăх, çын çавăн ђухлĕ вăйлă.

Тата кирек мĕнле машшин та ĕçленĕ майпа кивелсе, çийĕнсе, йакалса пырат̆. Ăна çавăнпа йусасах пыраççĕ. Мĕнпе йусаççĕ? Тимĕр пайĕсене тимĕрпе, хурçă пайĕсене хурçăпа тӳрлетсе пыраççĕ. Пирĕн ӳттирпе шăмшак та машшин пекех, çийĕнсе кивелет. Çавăнпа

пирĕн кĕлеткене те çĕнетсех пымалла. Машшинсене хуçи çĕнетет. Пирĕн ӳттирпе шăмшак епĕр çинĕ апатран илсе хăйне хăйех çĕнелсе, йусанса пырать. Хай машшинăн тимĕр пайĕсене хурçăпа, хурçă пайĕсене йăвăçпа йусама йураман пек, пирĕн ӳттирпе шăмшака, нервăсемпе, мимесене те çĕнетсе йусаса пыма çавăн пекех кашнинех хăй йышши йапала кирлĕ. Епĕр çийекен апат-çимĕçсенђе çав кирлĕ йапаласем пур. Анђах пĕр пек мар. Хăшĕнђе ӳттир йышши нумай, шăмшакпа мимесене йурăхли çителĕклĕ мар. Тепĕр апатра шăмшака кайакан çителĕклĕ, мимесемпе нервăсене йураканĕ çук, йе тата ăшђикке ăшăтаканĕ сахал. Çавăнпа етем пĕр тĕслĕ апатпа: йе çара çăкăрпа, йе çара çĕрулмипе, йе çара çупа та пурăнаймасть, ăна тĕрлĕрен апат-çимĕç кирлĕ. Сăмахран, çара çĕрулмипе пурăнас тесен, кунсерен 12-шер кĕрепенке çĕрулми çимелле. Çавах та усси çителĕклĕ пулмасть, хырăм анђах тулать, вăл пĕр йенђен. Тепĕр йенђен, куллен çĕрулми çийейместĕн: вăл йăлăхтарса анми пулать.

Çапла ĕнтĕ епĕр çинĕ апат:

1. Пирĕн ăшђикке ăшăтса тăрать;

2. Ашри машшина ĕçлеттерет;
3. Ӳттирпе шăмшаксене çĕнетсе йусаса пырать;
4. Тата çынна ĕçлемелĕх те вăй-хăват парать.

Машшинăн вуҫĕ мĕн ҫухлĕ хĕрӳ çунать, çавăн ҫухлĕ машшин вăйлă ĕçлет, терĕмĕр. Етем те çавăн пекех: мĕн ҫухлĕ ĕçĕ йăвăр, çавăн ҫухлĕ апаҫĕ лайăх кирлĕ.

Вĕреннĕ çынсем кăтартнă тăрăх çăмăл ĕçре пурăнакан çитĕннĕ вăтам çынна кунсерен ак çакăн ҫухлĕ апат кирлĕ:

$1\frac{1}{2}$ кĕрепенке (600 крам) çăкăр,

1 кĕрепенке (400 крам) çĕрулми,

$\frac{1}{4}$ кĕрепенке (100 крам) кĕрпе,

$\frac{5}{8}$ кĕрепенке (250 крам) панулмипе çырла таврашт,

1 кĕрепенке (400 крам) ҫĕрĕ пахҫа çимĕçĕ,

$\frac{1}{8}$ кĕрепенке (50 крам) çу,

$\frac{1}{8}$ кĕрепенке (50 крам) сахăр,

$\frac{1}{2}$ (200 крам) аш,

7 сулатник тăвар,

5—6 кĕрепенке шыв.

Шывĕпе тăварне кирек кам та çителĕклĕ ăша илет ĕнтĕ. Ку çăмăл ĕç ĕçлекен çын апаҫĕ терĕмĕр. Пирĕн ҫăваш пек çĕр ĕçлесе

пурӑнакан ҫынна тата ытларах кирлӗ. Мӗншӗн тесен ҫӗр ӗҫӗ ытти ӗҫсенҗен йавӑр ӗҫ.

Апат-ҫимӗҫӗн усса пыракан пайӗсене кунта епӗр тӑрантаруллӑ йапаласем тейӗпӗр. Куллен лайӑх апат ҫисе пурӑнакан ҫыннӑн ҫав тӑрантаруллӑ йапаласем ӑшра саппас та пулса пыраҫҫӗ. Хаҗ ҫинӗ апатра хӑш пайӗ те пулсан ҫителӗклӗ пулмасан, ӑшҗик ӑна ҫав саппасран илет. Кунсерен апат наҗарӗпе тӑрантаруллӑ йапаласем ӑшра ҫителӗклӗ пулса пыраймаҫҫӗ. Ашҗик вара ҫав йапаласене ирӗксӗрех хӑй кӗлеткинҗен илет. Тӳрех каласан, етем хӑй ӳтне хӑй ҫийет. Ҫавӑнпа наҗар апатпа пурӑнакан ҫын наҗарланнӑҫем наҗарланса, шӑранса, ҫӑмӑлланса пырать. Ун пек ҫыннӑн ӗҫлес килми пулать, пӗрмайах ҫывӑрас килет. Ҫын хӑйне хӑй йавӑрланса, ӳркеннӗ пек пулать. Ӑна тӗрлӗ җирҗӗр җасах пусмӑрлать. Ҫапла пурӑна пурӑнах вӑхӑтсӑр вилет.

Ҫапла ӗнтӗ сывлӑхне те, вӑйне те, пурне те ҫинӗ апат тӑвать.

## Мӗнле апат-ҫимӗҫ усӑллӑрахши, тутӑрахши?

Епӗр темиҫе тӗрлӗ апат ҫийетпӗр, анҗах ҫав апатсем пурте пӗр пек усӑллӑ мар. Ашпӑшпа, сӗт-турӑхпа, ҫӑмартапа пӗҫернӗ апат

çимĕçсем тутăрах та тытаççĕ, усăллăрах та хисепленеççĕ. Çав апат-çимĕçсенҫе ăшҫикке ăшăтаканĕ те, вăй-хăват параканĕ те, ӳттирпе, шăмшакка йусаканĕ те, пурте ытларах. Тыră-пулăпа пахҫа çимĕçсенҫен пĕçернĕ апат усăллăх тĕлĕшпе вĕсене çитеймест.

Тата апат-çимĕçĕн усси пĕлсе пĕçернинҫен те нумай килет. Сăмахран, çĕрулмийех илер. Пиçнĕ улмана вĕриллех шуратса, лайăх ватса шӳрпе туса çини, çу тавраш йамасан та, çĕрулмийе ҫăмăрлах çининҫен усăллăрах, йуна кайарах парать. Типĕ апат йуна сахал кайать. Тата вакăрах авăртнă çăнăх çăкăрĕ шултăра çăнăх çăкăрĕнҫен усăллăрах.

Епĕр çийекен апат тугă тыттăр, усса пырах патăр, сайа ан кайтăр тесен, апат-çимĕçе техĕмлĕ (тутлăхлă), сĕтеклĕ пĕçерес пулать. Техĕмсĕр апат-çимĕç, лайăх, усăллă хатĕрсенҫен пĕçерсен те, усса сахал пырать. Мĕнле апат техĕмлипе техĕмсĕррине çăвар ăшҫикки хăйех систерет. Лайăх, техĕмлĕ апат шăрши кĕрсенех, пирĕн çăвар шывланса кайать. Çăвар анҫах та мар, хырăмлăх та шăрша сиссе, хăйĕнҫен пăҫăр-пăҫăр сĕткен кăларса тăрать. Çинĕ апат çăвартах сĕлекепе йавăнса, хырăмлăхра

тата хырӑмлӑх сӗткенӗпе хутшӑнса, лайӑх исленет те, йуна лайӑх кайаҭ. Ҫавӑнпа апата техӗмлӗ пӗҫерме пӗлни питӗ паха.

## Апат йӑлӑхтарни.

Апат-ҫимӗҫ йепле лайӑх, техӗмлӗ пулсан та, куллен кун ҫийе пуҫласан йӑлӑхтарса ҫитет, курас килми, шӑршине тӑрас килми пулаҭ. Апат-ҫимӗҫе ҫавӑнпа тӗслӗрен, улӑштарса пӗҫерес пулаҭ. Аш-пӑшпа сӗт-турӑхран пуҫне, апат-ҫимӗҫе тӗрлӗрен пӗҫерме пахҙа ҫимӗҫӗсем нумай пулӑшаҫҫӗ. Анҙах улӑштарса пӗҫеретӗп тесе, мӗн ӑса килнине йарса пӗҫернипе йурамасҭ. Апла тусан ҫимӗҫ хатӗрӗ анҙах сайа кайаҭ. Сӑмахран, пӗр хампа пулнӑ мыскара ҫинҙен каласа парам.

Пӗрре хӗлле аттепе анне сӑра ӗҫме кайсан, ларма хӗрсемпе уллаха тутлӑ пӑтӑ пӗҫерсе ҫийер терӗмӗр. Майрасем пӑтта сӗтпе пӗҫереҫҫӗ текелеҙҙӗ атте. Анне пӗҫерсе памасҭҙӗ. Хай хурана шыв йыранне пӗр ҙӳлмек сӗт йаратпӑр. Пӗ-рик-виҫ кӗрепенке пулӗ сысна ашӗ, ҫуллине кӑна кӳртсе йатӑм.—Пыл йарса пӗҫерсен пӑтӑ тутлӑ пулаҭ пулӗҫке, терӗ ман пӗр ларма хӗрӗ. Пӗ-рик кӗрепенке пулӗ пыл

та кӳртсе йатăмăр. Тĕнҫере туглă, ҫук пăтă пĕҫеретпĕр. Хуран вĕреме кĕрсен пиҫнĕ хуратул кĕрпи кӳртсе йатăмăр. Пăтă пиҫсен ик-виҫ хытă пиҫнĕ ҫăмарта тураса пăтă ҫине сартăмăр, ҫу та сапрăмăр.—Хамăр ĕҫлесе ҫийерха, тетпĕр. Пĕри ăсса хыпать, сурса кăларать. Тепĕри хыпать, урайнелле пĕшкĕнет. Мĕн пулҫĕ сире, таракан кĕмерĕ и? тетĕп хам. Хам та пысăк кăна кашăкпа ăсса хыпрăм....

Аран-аран лаххан патне ҫупса ҫитсе кăларса пăрахрăм. Кăмăл ҫĕкленет, ҫутах хăсса йараттăм. Хай пăтта кушак та, хураҫка та ҫимест.

Мĕншĕн ҫапла, ҫын мар, йытта та ҫиме йурăхсăр пăтă пулҫĕха вăл пирĕн? Мĕн ҫитмерĕши?

Нимĕнле ҫиме йурăхсăр йапала та йаманҫке ĕнтĕ? Пурте: пылĕ тесен пылĕ, ашĕ тесен ашĕ, сĕҫĕ тесен сĕҫĕ, кĕрпи, ҫăмарти, ҫăвĕ пурте пĕринҫен пĕри лайăх, усăллă, тутлăхлă йапаласем. Мĕн йурамарĕ иккен?

Кирек мĕнле ĕҫĕн те хăйĕн мелĕ пур. Апат-ҫимĕҫ пĕҫерессин те мелĕ питĕ пысăк. Ҫав меле пĕлмен епĕр. Мелне пĕлмесен, мĕнле лайăх хатĕрсем йарсан та, ҫиме йурăхлă, техĕмлĕ апат-ҫимĕҫ пулмасть, сайа кăна кайать.

Ей, хатĕрĕ пулсан, епĕр те пĕçерме пĕлĕттĕмĕр те-ха...—тени тĕрĕс маррине хамăрах куртăмăр ĕнтĕ. Мелне пĕлекен хĕрарăм çав хăйин кĕске йурварĕпе, пахҁа çимĕçĕпех те темиçе тĕрлĕ, сĕтеклĕ, техĕмлĕ, тутă апат пĕçерме пултарать. Çавă пирĕншĕн питĕ паха вара.

**Апата мĕнле çимеллине те пĕлес пулать.**

Çинĕ апат йуна лайăх кайтăр тесен, апата мĕнле çимеллине те пирĕн лайăх пĕлес пулать. Сăмахран, сĕтел çинҁе илемлĕ, лайăх шăршăллă, техĕмлĕ йашка тейĕпĕр. Пирĕн ҁăваш ĕçĕпех тĕп пулать. Апатне те васкаса çийет. Сĕтел хушшине вăшшăл-вашшăл ларса, кăпкап хыпкаласа, лĕри-лери сыпкалатпăр та, тăранса та тухатпăр.—Мĕн сĕтел хушшинҁе вăрах лепҁĕртетсе лармалла! тетпĕр.

Анҁах çапла васкаса çинĕ апат, йепле усăллă, техĕмлĕ пулсан та, унăн усси сахал. Сийенĕ пулма пултарать. Апат лайăх йуна кайтăр тесен, апат-çимĕçе çăварта лайăх ҁăмласа, çăварти сĕлекепе йавăштарса çимелле. Çăварти сĕлекепе лайăх хутшăнман апат хырăмра та лайăх исленмест. Виççĕмĕш пайĕ ытла сайа кăна

кайаҭ. Çапла васкаса çийекенсенҍен хăшпĕрин шăлĕсем те наҍартарах пулсан, тата çăвар ăшĕ те тасах пулмасан, вара ăша пăсни анҍах пулаҭ. Апат ăшра лайăх исленсе йуна кайни анҍах пире пурăнăç парса тăраҭ. Йуна кайман апат-çимĕç сайа кăна кайаҭ.

**Апата куллен пĕр вăхăтра çини те паха.**

Епĕр çийекен апатăн усси тĕллĕ çининҍен те килет. Кунне виççĕ çиме хушаççĕ. Ирпе тăрсан, ĕçе тытăниҍҍен, ирхи апат тумалла. Кăнтăрлара иккĕмĕш хут çийен. Виççĕмĕшĕ каçпа çийĕнет. Анҍах ирхи апата та, кăнтăрлахине те, каçхи апата та, пурне те пĕр вăхăтра çиме вĕренес пулаҭ. Кунсерен апата пĕр вăхăтра çиме вĕренсен, хырăмлăх, çийес вăхăт çите пуçласанах, хăйĕнҍен сĕткен кăларма пуçлаҭ. Хырăмлăх сĕткенĕ малтан тухса тăни çийес килнине те уçса йараҭ, тата апата лайăх ислетсе йуна йараҭ. Апата тĕлсĕр: пайан маларах, тепĕр кун кайарах йулса çинипе хырăмлăх сĕткен кăларса вăхăтне ҍухлаймасҭ. Ĕнер çинĕ вăхăтра кăлараҭ, ир пулаҭ, хуçи, çийес килнине туйсан та, апата лартмасҭ.

Куллен пӗр вӑхӑтра ҫиме вӗреннӗ ҫыннӑн, ҫав вӑхӑтра ҫимесен, кайран ҫийес килни те пӗтет, йуратнӑ апаҙӗ пулсан та ҫийессийех те килмест, ҫисен те кирли пӗтӗмпех усса пымасҭ. Апат-ҫимӗҫ техӗмӗ тасалӑхран та килет. Апат-ҫимӗҫ техӗмлӗ те, усӑллӑ та пултӑр тесен, апат-ҫимӗҫ тыткалакан савӑт-сапа те, пӗҫерекенӗ хӑй те питӗ таса, тирпейлӗ пулас пулаҭ. Тасамар савӑт-сапара йепле лайӑх хатӗрсенҙен пӗҫерсен те, нихӑҫан та техӗмлӗ апат-ҫимӗҫ пулмасҭ.

## Сийенлӗ апат-ҫимӗҫ.

Пӑсӑлма пуҫланӑ хатӗртен, пӗлсе пӗҫерсен те, усӑллӑ апат-ҫимӗҫ пулмасҭ. Пуринҙен ытла сывмар выҙӑх-ҙӗрлӗх ашне, йе сӗтне ҫиме хӑрушӑ. Выҙӑх ҙирӗ ашӗпе сӗтӗнҙен ҫынна та сикме пултараҭ. Сысна ашне, сыввинне те лайӑх пӗҫермесӗр ҫиме хӑрушӑ. Мӗншӗн тесен сысна ҙирӗпе ӳҙӗ хушшинҙе шӑрка пек вакҫеҫҫӗ, шапшурӑ хуртсем пулаҫҫӗ. Ҫав хуртсем лайӑх вӗресе пиҫмен ашра вилсе пӗтмеҫҫӗ.

Вӗсенҙен пӗр-иккӗшӗ вилмесӗр ҫын ӑшне кӗрсен, унта хӑвӑрт ӗрҙесе те кайма пултараҫҫӗ.

## Пирĕн ҫăвашăн апаҫĕ.

Мĕншĕн пирĕн ҫăваш лайăх апат-ҫимĕç ҫисе пурăнаймасть?

Ҫак кĕнекене вуласа пăхсан нумайĕшĕ тўрех епĕр хура халăх ăçтан кунта калавă пекҫисе пурăнайпăр? Пирĕн темĕнле тутă апатҫимĕç тума хатĕрĕ çук; сĕтел хушшинҫе нумай ленҫĕртетсе ларма вăхăҫĕ те кĕске;— Пире улмапа салма сывă пултăр, вĕсем пулсан епĕр выçă вилместпĕр вара, тейеççĕ.



**Ҫăваш арăмĕ кăмакине вутă хутнă, çавăнтах хуран айне ҫĕртнĕ, çĕрулми пĕçерет. Хăй кăмаки умĕнҫе кăнҫала авăрласа ларать.**



**Майра та кӑмакине вутӑ хутнӑ. Кӑмакинҫе икӗ ҫукун вӗрет: пӗри пысӑк, шыв ҫукунӗ, тепӗри пӗҫӗккӗрех йашка ҫукунӗ. Майра кӑмаки умӗнҫе ҫаннисене таварнӑ: васкаса ҫуста ҫӑрать. Ҫавӑнтах купӑста пуҫӗ выртать, суханӗпе кишӗрӗ курӑнать. Кӑмака умӗнҫе пӗр хӗрринҫе ҫӗрулми тураса лартнӑ тӑм ҫашӑк курӑнать. Хӗрӗ 10—12 ҫулта ҫашкӑпа темӗскер тӗвет.**

Паҫӑрах каларӑм: хура халӑх ӗҫӗ пур ӗҫрен те йӑвӑр ӗҫ. Ҫавӑнпа ӗҫне кура апатне ҫийес пулать. Есӗр калани те ҫӑн, йаланах апат ҫийейместех пирӗн ҫӑваш. Анҫах мӗншӗн ҫийейместпӗрши?

Пуринҫен ытла пире хамӑр пурӑнма, апат-ҫимӗҫе хатӗрлесе пӗҫерме пӗлменни хуплать. Апат-ҫимӗҫ хамӑр сывлӑхшӑн мӗнле пахине

пĕлсен, епĕр те, вăй çитнĕ таран, апат-çимĕçе техĕмлĕрех, тутлăхлăрах тума тăрăшăгтăмăр. Халĕ епĕр çисе хырăма анҫах тултаратпăр. Ирпе салма, каçпа улма: йе ирпе улма, каçпа салма çийетпĕр. Кăнтăрлине пулсан типĕ çăкăрпа уйран сыпкалатпăр, пулмасан типĕ çăкăр кавлекелесен те иртет. Хамăр ҫас ҫасах: вырăс çынни таçтан çитерет, апатне тĕрлĕрен пĕçерсе çийет, тесе тĕлĕнетпĕр. Лайăхрах шухăшласа пăхсан, тĕлĕнмеллийех те нимĕн те çук. Вырăссем те пирĕн пекех çĕр ĕçлеççĕ. Тырри-пулли те çав пирĕнни пекех аран хире хирĕç çитсе пырать. Выҫăх-ҫĕрлĕхĕ те: пĕр ĕни пур, пĕр лаши, 3—4 çурăхĕ пулсан, тата 8—9 ҫăххи, 2—3 сысна çури пур. Çавах та пирĕн ҫăвашран лайăхрах апат-çимĕç çийет. Çапла танлаштарса пăхсан пирĕн ҫăваш пурăнма пĕлменни питĕ лайăх паларать. Çитмен пурăнăç, çитмен пурăнăç! Апат-çимĕçе йалан аш-пăшпа анҫах пĕçермеççĕ. Апат-çимĕçе тĕслĕрен пĕçерме пире пахҫа çимĕçĕсем нумай пулăшаççĕ. Пахҫа çимĕçĕ тăвасси хамăртанах килет. Анҫах пирĕн ҫăваш хушшинҫе пахҫа çимĕçне тăрăшса тăвакан пулсан та питĕ сайра.

## Пахђа çимĕçĕ тăвасси—хĕрарăм ĕçĕ.

Пахђа çимĕçĕ лартса тăвасси кам ĕçĕ? Хĕрарăм ĕçĕ. Хĕрарăм çине тăрса тытăнсан, арçын та санпа пĕрле ĕçлет. Кăна хирĕç епĕр тăтăшах акă мĕн илтетпĕр. Пирĕн йалта пахђа çимĕçне лартсан та тăратмаççĕ, вăрласах пĕтереççĕ, теççĕ.

Мĕншĕн çĕрулмине никам вăрлакан та çукха?

Килĕсерен пахђа çимĕçĕ пулсан, ăна та вăрлакан пулмасť. Çавăнпа ĕнтĕ пахђа çимĕçне пĕђђен-иккĕн анђах мар, пĕр сăмахра пулса, йалĕпех тăвас пулаť. Вăл пурне те кирлĕ йапала.

Хăшĕ пĕри тата: пирĕн тĕрлĕ пахђа çимĕçĕ тума пахђи те кĕçĕн, çĕрулми лартмалăх кăна, теççĕ. Ăна хирĕç акă мĕн калас тетĕп: çĕрулмийе хире лартсан та питĕ лайăх. Пахђа тĕрлĕ çимĕç акма йулаť.

Тĕрлĕ пахђа çимĕçĕ çителĕклĕ пулсан, пирĕн ђăваш апађĕ те салмапа улма анђах пулмĕђђĕ. Салмана хурласа калаçмастăп епĕ, пĕçерме мелне пĕлсен салма та питĕ техĕмлĕ, тутă тытакан йашка. Анђах епĕр салмана

мĕнле пĕçеретпĕр? Çур хуран шыв çине тăвар йаратпăр. Çур ђашăк çĕрулми шуратса. урлă пирлĕ каскаласа йаратпăр. Вĕреме кĕрсен нӳрленнĕ нӳрленмен ђустаран салмине çерçи пуçĕ пек тата-тата йаратпăр. Салмине йарсан хуран айне вăйлăрах хурса вĕрететпĕр. Салмисем, çерçисем вакка пухăннă пек, шакăрах çийеле хăпарсан, пиçрĕ тесех антарса та илетпĕр. Пулсан пĕр-ик кашăк пек турăхне, мăйăр пек çуне катса йаратпăр, пулмасан çаплах та çийетпĕр. Мĕн тăвас тетĕн, выçă хырăм çийет. Тĕрлĕрен пахђа çимĕçĕ пулсан, çав салманах та урăхларах пĕçерме пулаť. Хурана шывне çакса тăварне йарсан, пĕрик, пĕрик пуç суханне, пĕрер кишĕрне вакçеççĕ тураса йаратăн. Çĕрулмине шуратса туриђђен лайăх çуса, вакçеççĕ лапша пек тураса йаратăн. Çĕрулмийе турасан тин çусан, улман çынна ђи усăллă йапали крахмалĕ пĕтĕмпех шыв çине тухса йулаť. Туранă улмана çусан шыв шапшурă пулнине кирек кам та сăнанă пулмалла. Çавăнпа çĕрулмийе туриђђен лайăх çуса, турасан çумасăрах йараççĕ.

Вĕренĕ çĕрех, çуне те йаратăн. Вĕреме кĕрсен тутлă купăста шапшуррине вакçеççĕ

епӗ пӗҫӗксӗ ҫухнех пахҫине пирӗн пек ҫӗрулмипе тултармасҫӗ, темиҫе тӗслӗ пахҫа ҫимӗҫӗ акса тӑваҫҫӗ. Ҫапла ҫӗрулми йышлӑрах лартсан сӗт-турӑхӗ те, аш-пӑшӗ те пулаҭ.

Пахҫине вӑл кӗркуннех лайӑх сухалаттарса хӑвараҫҫӗ те, кирлӗ-кирлӗмар курӑк тымарӗсем хытӑ шӑннипе, пахҫи ҫимӗҫӗсене пусмӑрлаймасҫӗҫ. Ҫӑварнисем иртсенех йешҫӗксем ҫине тӑпра тултарса помиторӗсене акаҫҫӗ. Тӑприне кӗркуннех хатӗрлесе хӑвараҫҫӗ. Помитор йешҫӗкӗсем пӳртӗнҫех ҫӳреҫе тӗлӗнҫе саккисем ҫинҫе лараҫҫӗҫ вара. Шӑтса 2—3 ҫулҫӑ йарсан, тепӗр йешҫӗк ҫине куҫара куҫара сайрарах лартаҫҫӗ. Тӑмсем иртсе пӗтсен, йӑран туса пахҫине куҫарса лартаҫҫӗ. Кишӗрӗпе ҫулҫӑллӑ суханӗсене пахҫинҫен йур лайӑх кайса пӗтиҫҫенех акаҫҫӗ. Халӗ хамӑр та ҫаплах акатпӑр. Суханпа кишӗр вӑррисем сивӗрен питех хӑракан йышшисемех мар вӗсем. Мӗн мӗн кӑна ҫукҫӗ ҫав ӗнтӗ ун пахҫинҫе!... Купӑсти-хӑйарӗ, ҫарӑкӗ-кишӗрӗ, помиторӗ-кавӑнӗ, икӗ тӗслӗ суханӗ, ҫӗкӗнтӗрӗ-кӑшманӗ, темӗн те пурҫҫӗ. Кӗркунне пулсан темиҫе тӗрлӗ вӑрӑ тӑваҫҫӗ. Вӗсене ҫуркунне тавра йалсене ҫӑмарталла сутса ҫуреҫҫӗ.

Темĕн ђухлĕ çăмарта пухађђĕ çапла, хăйсем вара шетникĕ-шетникĕпе (стайкипе) хăйарне, купăстине, помиторне тăварлађђĕç. Хĕпхĕрлĕ пиçсе кайнă помиторĕсене тата ђукунпа вĕретсе хурађђĕ. Кишĕрĕ, çарăкĕ, ђĕкĕнтĕрĕсем, кавăнĕсем ваљљи йури патвал ђавтарнăђђĕ. Кĕркунне çавăнта тултарађђĕç. Ађисем хĕл хута ђĕрĕ пахђа çимĕç шатăртаттарађђĕç вара. Ей, çийес килеђђĕçке! Пысăклана пуçласан вĕсем патне, йе авăн çапма, йе сӳс нимине кайкаласан, кӳпĕниђђенех çийеттĕмĕр çав вара. Темиçе тĕслĕ йашка çитеређђĕ. Ђи малтан помитор йанипе хĕрлĕн илемлĕ курăнса тăракан купăста шӳрпине антарса лартађђĕ. Çийеле тата виç-тăват кашăк хăймине кӳртсе йарађђĕ. Ей, илемлĕ йашка пулађђĕçке, куç курнипе çийес килсе тăрађђĕ. Шӳрпине çисен, сысна ашĕпе пĕçернĕ çĕрулми шаркуне кăларса лартађђĕ. Улми, хай çу çинђе пиçнĕскер, çăварта ирĕлсе кăна тăрађђĕ çав. Çавăнтах пĕрер ђашăк тăварланă хăйарне, тепĕр ђашăк йӳçĕтнĕ пуç купăстине тураса лартађђĕ.

Виççĕмĕшне, кăмакари ђӳлмекпе лартса парланă сахăрнăй тейекен ђĕкĕнтĕрне лартса

çитеређђĕ. Ей, тутлăђђĕçке! Пыл йарса пĕçернĕ пек туйăнађђĕ. Апат хыççăн сывлайми пулаттăмăр вара. Ђĕрĕ пахђа çимĕçĕсене унта умран йулиђђенех çийеттĕмĕр. Вĕсем ниме тăваççĕ тенине илтсен пĕтĕм касă çамрăкĕ ăмăртса пухăнађђĕ çав вара.

Халĕ ĕнтĕ çав ват инкерен пĕтĕм йал вĕренсе кайрĕ. Акрономсем те пулăшрĕç.

Хамăр ĕлĕк йепле пурăннине шухăшласан ăнтан кайан çав...

Хĕле кĕрсен улма та салма, салма та улма çийеттĕмĕр.



**Пахђа тулли тĕрлĕ пахђа çимĕç, Укахви инке хăй те пахђинђе.**

Халĕ тата хире çĕрулминђен пуçне вылђăхсем ваљљи турнепс, ђĕкĕнтĕр акатпăр. Çавсем пĕтĕм йала çĕклентерсе йађĕç. Кĕркунне пĕрер патвал тултарса хуратпăр вара. Ĕнесем çавсене çитернипе сĕте хĕл хута шарăлтаттараççĕ кăна. Сыснасем аран машлатса çӳреççĕ. Халĕ пирĕн килĕсерен тенĕ пекех йашка-çăкăр, тĕрлĕ апат-çимĕç пĕçерме вĕрентекен кĕнекесем пур. Пĕрне акроном кӳрсе пађĕ те, халĕ нумайĕшĕ туйаннă ĕнтĕ. Хĕрарăмсем апат-çимĕçе кĕнеке тăрăх пĕçереççĕ.

— Вара сирĕн хĕрарăмсем те пурте вулама пĕлеççĕи мĕн? терĕм епĕ тĕлĕнсе.

— Çук, пуртех пĕлмеççĕ те, çуртра çыру пĕлекенĕ пурах ĕнтĕ. Мĕн-мĕн йамаллисене вуласа параççĕ те, пĕçереççĕ вара. Хăшĕ кĕнекесĕрех темĕн те пĕр пĕçерме пĕлеççĕ ĕнтĕ. Акă вăл кĕнеке! терĕ ку мана кĕнекине ђӳређерен илсе. Ак çак 4—5 çул хушшинђе халăх та çапçутă çуталса кайрĕ. Ђирлекен те сахал. Çав ват инке тени 70-рен иртнĕ ĕнтĕ, çаптарса кăна çӳретха, çу пулсан кунĕпе пахђинђен кĕмест вăл. Мĕн тесен те сынна

апат тăваť çав!... терĕ ку кĕнекине мана парса.

Вĕсен пурăнăçне ытараймасăр, хамăр хĕрарăмсене апат-çимĕç пĕçерме вĕрентес шухăшпа, çав кĕнеке çинђен çăмăлтараххисене суйласа çырса илтĕм.

## Акă вĕсем:

Тĕрлĕ пахђа çимĕçĕ тăвасси хĕрарăм ĕçĕ терĕмĕр. Пахђа çимĕçне тирпейлесе, упрама пĕлни те пирĕн ĕçех. Пĕлмесĕр хатĕрленĕ пахђа çимĕçĕ сайа кăна кайаť.

### Хăйар тăварласси.

Хăйара авкуст уйăхĕ пуçлансан тăварлас пулаť. Маларах тăварлама йурамасť, хăйар çамрăкрах пулаť, кайарах йулсан ватăлма пуçлаť. Хăйар тăварламалли шетникне (стайкине) малтан siксе вĕрекен шывпа, шетникне хĕртнĕ ђул йарса парлас пулаť. Унтан, тăварлас умĕн, сивĕннĕ вĕренĕ шывпа çуса, йе укроппа (йашка çине пиçсен тураса йарса çимелли лайăх шăршăлă курăк, кишĕр çулçи йевĕрлĕ) йе хура хурлăхан çулçипе сăтăрас пулаť. Унтан шетник тĕпне укроп çулçи

сарса, пĕр-ик хĕрен шуратса хурас пулаҭ. Унтан хăйарне çуса тултарас пулаҭ. Çийеле каллех йе укроппа, йе хура хурлăхан çулçипе витсе каллех икĕ хĕрен шуратса хурас пулаҭ. Унтан шăлт кăна кĕрсе ларакан ăвăспа витес пулаҭ. Шывне йама ывăсне ик-виç çĕртен шăтараççĕ. Шывне çапла хатĕрлеççĕ. Пĕр витре вĕретсе сивĕтнĕ пусă шывĕ пуçне 1½ кĕрепенке тăвар йараççĕ. Тăварĕ лайăх ирĕлсе пĕтсен, таса шурă çĕтĕке хайхи шăтăк ывăс çине сарса, çавăн витĕр çийеле тухиђђенех тултараççĕ. Унтан ывăсĕ çине çĕкленесрен ђул çуса хураççĕ. Хăйар кăвакарасран (лĕкĕленесрен) шетник тĕпне хура корђђитсă вăрри, таса çĕтĕк таткипе çыхса, пăрахсан лайăх. Хăйар шетникне йе тĕпсакайне, йе патвала, йе шăнман нӳхрепе лартас пулаҭ.

## Купăста тăварласси.

Купăста ваљљи те шетникне хăйар ваљљи хатĕрленĕ пекех тасатса парлаççĕ. Купăстана окҭапĕр уйăхĕнђе тĕвеççĕ. Купăстана кассанах тӳмеççĕ, пĕр-ик-виç кун выртарсан лайăх. Тĕвиђђен тасатса, симĕс çулçисене уйăрса

хурас пулаѣ. Вёсене ăрасна тӳсен лайăх. Ку-
пăста тӳме хăйне валашка кирлĕ. Валашки
пулмасан шетникĕнђе тӳсен те йураѣ. Ку-
пăста ђасрах йӳçтĕр тесен шетник тĕпне пĕр
пӳрне хулăнăшĕ ыраш çăнăхĕ сараççĕ. Тă-
варне тӳнĕ çĕрех йарсан лайăх, анђах тĕ-
пĕнђи купăстана сахалтарах тăварлас пулаѣ.
Пĕр пăт купăста пуçне виç ђĕрĕк тăвар çитет.
Тӳнĕ купăста хушшине вакрах пуçĕсене çур-
маран касса, шултăрисене тăвată пай туса,
тăвар сапса йĕркипе хурас пулаѣ. Купăста
тӳнĕ çĕре пăт пуçне пĕр-ик вăтам ђĕкĕнтĕр
йарсан лайăх. Çапла пĕр си тӳнĕ купăста,
тепĕр си пуçĕпе хурса тултарас пулаѣ. Тӳнĕ
купăсти йашка çине йама, пуçĕ ахаљ çиме
лайăх пулаѣ. Çийеле таса çавра ывăс вит-
мелле. Шыв йарас пулмасѣ, купăста хăйех
шывланса кайаѣ. Ђасрах йӳçме пуçлатăр те-
сен, тӳсенех пĕр-ик кун ăшăрах çĕрте ларт-
малла. Йӳçсе кăпăклансан купăстана йе хурăн,
йе йуман патакпа тĕпне çитиђђенех шăта-
раççĕ. Шăтарнă çĕртен шăршă-маршăсем ту-
хаççĕ, тата купăста лайăх шывланаѣ. Йӳçсе
ђарăнсан хăйар пекех сулхăнрах (сивĕрех)
çĕре лартмалла. Купăстана таса кашăкпа, йе

куркапа тикĕс илсе парас пулаť. Тикĕс илмен купăстан тĕл тĕл шывĕ пухăнса тăраť, тĕл тĕл типпе йулса купăста кăвакарма пуçлаť. Купăста лайăх тăтăр тесен, шывĕ çийеле пĕр пӳрне хулăнăш тухса тăмалла.

## Панулми йӳçĕтесси.

Панулмине йӳçĕтме йăвăç çинђен татсанах лайăх. Ытлашши пиçсе, çемçелсе кайнă панулми йӳçĕтме йурамасť. Йӳçĕтме хытăрах сурт лайăх. Малтан шетникне çуса тасатса, тĕпне йе *ђийе*) çулçи*, йе хура хурлăхан çулçи сармалла. Унтан панулмине çуса ик-виç ĕрет аврисене çӳлелле туса хурса тухмалла. Каллех çулçă сарса панулми хумалла. Çапла шетникĕ тулиђђенех хуран. Çийеле татах хай тĕпне сарнă çулçăсенех витмелле. Унтан вĕренĕ шыв çине витре пуçне пĕр кĕрепенке вак сахăр йарса, сивĕтсе, панулми çине тултармалла. Сахăр йамасан, шыв çине пăртакçă ыраш çăнăхĕ ирсе йарас пулаť. Çийеле çавырака таса ывăс витсе, çĕкленесрен ик-виç таса çăка патаксемпе хĕреслетсе хытарса

---

*) Ђийе çулçи—вишђѣ çулçи.

хумалла. Йанă шывĕ панулми çине çийелех тухтăр. Типпе йулнă улма ђас пăсăлаť. Çапла йӳçĕтнĕ панулми 6 ернерен йӳçсе çиме йурăхлă пулаť.

## Кăмпа тăварлассиӗ.

Ђăн кăрăçа та, шурă кăрăçа та, хурăн кăмпине те пурне те тăварлаççĕ.

Кăрăçсене татса килсенех тымарĕсене касса, кăмпине çĕçĕпе хырса тасатаççĕ. Унтан тăварлиђђен пĕрер тавлăка вĕретсе сивĕтнĕ шыв çине йарса хураççĕ. Вара шывне сăрăхтарса, ђĕрес тĕпне тăвар сапса, кăмпасене ĕређĕпе щĕлепкисене çӳлелле туса лартса тухан. Ĕретсерен тăвар сапса тухан. Çапла ђĕресĕ тулсан çийеле шăлтах кĕрсе ларакан ывăс витсе, таса ђулпа пусарас пулаť. Кăмпа пусăрăнса вырăн пулсан, ывăсне илсе тата çийеле кăмпа тултаран. Кайран таса шурă çĕтĕк витсе, ывсине хурса, ђулпа пусарса, сулхăн çĕре лартан. Çийелти кăмписем кăвакара пуçласан, вĕсене илес пулаť.

Шур кăмпана типĕтсе хумалла. Типĕтнĕ кăмпан тути те ан пĕттĕр, тĕсĕ те ан çухалтăр тесен, вĕсене тасатса, тунисене касса,

шăлса типĕтсе, çип çинçе хулă çине тирсе, вĕрийех [мар кăмакана пĕр си ыраш улăмĕ сарса, çав кăмпасене хурса тухас пулаť. Тепĕр кун кăмакаран кăларса, типнĕ пулсан çип çине тирсе хумалла. Типĕтнĕ кăмпа шӳрпи питĕ сĕтеклĕ. Шӳрпи çине 4 çын пуçне 5 кăмпа йарсан та çитет. Унтах çĕрулми, сухан тураса йарас пулаť.

## Помитора мĕнле усрасси.

Помиторсене пиçнине анђах мар, симĕсси-не те тăварлама йураť. Таса шетник, йе ђĕ-рес çине помиторне çуса, си-си тăвар сапса тултарсан та, çийеле ывăспа пусарса хуран. Вăл тӳнĕ купăста пек хăйех йӳçсе шывланаť. Тăварланă помитор хĕлле çĕрулмипе çиме питĕ лайăх.

Лайăх пиçнĕ помиторсене çуса ђукуна тул-тараççĕ те, вĕри кăмакана лайăх хупласа лар-таççĕ. Вăл унта çĕр хута лараť. Тепĕр ир ђукунтан кăларса, ала айне ђашăк лартса, алине ӳпне хурса, çав помиторсене ала ви-тĕр кашăкпа сăтăра сăтăра кăлараççĕ. Ала çине, кашăк айне, помитор хуппи кăна тăрса йулаť. Çав ала айне тухнă помитора ђукуна йарса

майёпе пăтратса вёретесççё. Унтан сивёнсен кăкшăмсем, йе ђўлмексем çине тултарса, кăмсăкланасран (кăвакарасран) çийеле пёрер кашăк йе сарă çу, йе кантăр çăвё йараççё. Унтан ђўлмек çăварне таса ланђашкапа çыхса, нўхрепелле антарса лартаççё. Çапла хатёрлесе тунă помитор хёл хута шўрпе çине пёр-ик кашăк йама лайăх.

## Ашпа пёçернё çёрулми шўрпи.

Шўрпе ваљљи çын пусне икё вăтам шыв курки шыв çакас пулат̆. Ашне çын пусне ђёрёк йарсан техёмлё йашка пулат̆. Ашё ытла та сахал пулсан, ăна йашка çине вакçеççё тураса йарсан, йашка сётеклёрех пулат̆. Ашне çунă ђухне шыва йарса хума йурамаст̆, аш тути шыв çине тухса пётет. Тăварне сапса пăхса ђухлан. Çын пусне 3—4 çёрулми вак çеççё тураса йаран. Пёр-ик пус суханне, пёрер кишёрне вак кăна тураса йаран. Вёресенвёресен йашка çинђи лёккине пухса илсен лайăх, унсăрăн вăл йашка илемне йарат̆. Унтан пёрер кашăк салмалăх çăнăхё илсе, сивё шывпа лайăх пёрђё йулмиђђен ирсе, вёрекен йашка

çинех йаран. Вĕретессе майĕпе ҍылайах вĕретен. Антарса лартсан укроп тийекен курăка пĕр-ик ҍĕптĕм тураса йарсан, пăрăç йаран. Йашка хатĕр, лар та çи.

## Тутлă купăста шӳрпи.

Купăста шӳрпи çине те çав малтанхи шӳрпе çине йанисенех йаран. Çĕрулмине анҍах сахалтарах йарас пулать. Йашка вĕреме кĕрсен, пĕр-ик йĕкĕр ывăç тутлă купăста тураса йамалла, пĕрер помитор, хĕлле пулсан, хай кĕркунне пĕçерсе хунă помитора пĕр-ик кашăк йамалла. Антарса лартсан, пĕр-ик кашăк хăймине, пăрăçне йарсан, çиме те ларан.

## Йӳç купăста шӳрпи.

Ашне, шывне, кишĕрĕпе суханне малтан каланă пекех йамалла. Çын пуçне икĕ кашăк йӳç купăста илсе, тăрă шывпа пăрса йамалла, Ик-виç çĕрулми тураса йамалла. Пĕр-ик кашăк помиторне йаран. Йӳç купăста йашки кăмакара пиçсен лайăх, хуранта хăвăрт вĕретсе антарнипе лайăх пиçсе ĕлкĕреймест. Кăмакара та вут умĕнҍе вĕреме кĕртсе, кайран, вут çунса пĕтсен, маларах кăна лартсан, майĕпе

вĕресе лайăх пиçет. Шала лартсан вĕресе пĕтсе çиме çитми пулаŤ, шыв йарсан йашка шывакланса тути пĕтет. Антарса лартсан пăрăçне, пĕр-ик кашăк хăймине те йарсан, çисе тăранмалла мар сĕтеклĕ йашка пулаŤ. Хăймасăр та лайăх. Çинĕ çĕре пĕр-ик пуç сухан тураса йарсан тата урăх тутă кĕрет.

### Ашсăр çĕрулми шўрпи.

Çĕрулмийе ђукунпа пĕçерсе, шуратса, вĕриллех лайăх ватас пулаŤ. Ала витĕр кăларсан лайăх. Çав ватнă çĕрулми çине тăварне, пĕрер кашăк сарă çу, пĕрер ђĕрес çăмарта йарсан, унтан ик-виç стаккан сĕт йарсан, ыттине шыв та пыраŤ. Тепĕр хут йе хурана, йе ђукуна йарса вĕретен те, улма шўрпи пулђĕ. Лар та, çи

### Лапша—каснă салма.

Ашне, шывне, тăварне, суханĕпе кишĕрне малтан каланă пекех йаран. Йашки вĕренĕ вăхăтра лапшине хатĕрлен. Пĕрер стаккан шыв çине пĕрер çăмарта шăтарса йаран, тăварне ирен. Унтан йе тулă, йе пăри çăнăхĕпе салма ђусти пек лайăх нўрлениђђен çаран.

Нӳрленсе çитсен çӳпçӳхе пашалу туса, çăнăх сапса хутла хутла хуран та, вакçеççĕ каса каса хатĕрлен. Йашки ђылай вĕресе ашĕсем пиçсен лапшана йаран. Пĕр пĕринпе çыпăçса кайасран пĕрер пăтратса йаран. Лапшисем çийеле хăпарсан—пиçнĕ те вара.

## Сĕт лапши.

Йашка çакнă ђухне çуррине сĕт, çуррине шыв йаран. Тăварне ăрас калаттармалла мар, сĕт йашки шарак пулаŤ. Вĕреме кĕрсен лапшине маларах калана пек хатĕрлесе йаран. Вĕренĕ çĕре пĕрер кашăк йе сарă çу, йе услам çу йаран.

## Тăпăрђăпа тунă хуран кукăлĕ (пелмен).

Шӳрпине сĕт лапши вађђи пĕçернĕ пекех сĕтпе шыв хутăштарса вĕретмелле. Кукăлĕсене малтанах, йашкине (шӳрпине) çакиђђенех хатĕрлес пулаŤ. Тăпăрђђи питĕ типĕ пулсан, пĕрер кашăк хăйма йамалла, тăварне йаран. Унтан ђустине лапша вађђи çырнă пек хатĕрлесе, çупçӳхе пашалу тусан, стакканпа каса каса вĕтĕ икерђĕ пек тăван. Вара çав пашалăвĕ çине пĕрер ђей кашăкĕ тăпăрђă

хурса, пĕђĕк кукăљ туса, хĕррисене картласа хуран. Картламасан хуранта кукăлĕсем саланса пĕтеççĕ. Шўрпи вĕреме кĕрсен, кукăлĕсене йарса вĕретен. Пиçсен кукăлĕсем çийеле хăпараççĕ. Тăпăрђĕ вырăнне ђĕрĕ ашă тўсе, сухан, пăрăç, 3—4 кашăк шыв, тăвар йарса хутăштарса хурсан, ашпа тунă хуран кукăлĕ пулаť. Ăна пĕрер шăмă йанă шыв çинђе пĕçереççĕ.

---

## Шўрпе хыççăн çимеллисем.

### Вир пăтти.

Вир пăтти ваљљи малтан шывне вĕретсе, кĕрпине 4—5 хут вĕри шывпа çуса тăкан. Унтан кĕрпине ђукуна йарса, шывне пĕр-ик пўрне хулăмĕш çийеле кăларан та, тăвар йарса, вут çунса пĕтсен кăмакана лартан. Вĕресен вĕресен шывĕ типет, кĕрпи çемçелсе сарăлнă-сарăлман пулаť. Ун çине пĕрер стаккан сĕт йарса пăтратан та, ђукуна витсе, кăмакана маларах кăна лартан, çемçелнĕ кĕрпе кўпђесе кайаť. Антарсан пăртакçă çу пăтратан пулсан сивĕ сĕтпе сыпса çийен.

### Пĕçернĕ хуратул пăтти.

Шывне малтан вĕретен те, кĕрпине сивĕ шывпа çуса, çав вĕренĕ шыв çине йаран. Шыв ҫылай çийеле тухтăр. Вĕресе кĕрпи сарăлсан, кăмакаран кăларса, пĕрер ҫей кашăкĕ çу пăтратса, витсе тепĕр хут маларах лартан. Шўрпе çикелиҫҫен вĕриленме шаларах тĕртсе хуран.

Пăри кĕрпи пăттине те çавăн пекех пĕçереççĕ.

### Çĕрулми пăтти (нимĕр).

Малтан çĕрулмийе ҫăмăрлах пĕçереççĕ. Унтан вĕриллех шуратса лайăх ватаççĕ. Ун çине пĕрер çăмарта шăтарса пăтратаççĕ, пĕрер стаккан сĕт йараççĕ. Тăварне йаран, пĕрер кашăк çу, йе çу выранне пĕр-ик кашăк хăйма йаран Çавна пурне те лайăх йавăнтарса, тăм ҫашăк, йе пăлашка çине хурса, ытла вĕри мар кăмакана лартан Шўрпе хыççăн кăмакаран кăларса паран.

### Кавăн пăтти.

Кавăн хуппине шуратса ăшҫиккине тасатса, шуррине çĕрулми туранă пек турамалла. Унтан çав туранă кавăна ҫукуна йаран, пĕр-ик

стаккан çуса тасагнă вир кĕрпине йаран. Тăварне йарса çийеле пĕр-ик пўрне хулăмĕш тухмалăх шывне йарса, кăмакана лартан. Вĕресен вĕресен пĕрер пăтратса йаран. Типĕрех пулсан, пĕрер ђей курки сĕт йарса пăтратса лартан. Витсе лартсан лайăх сарăлса кавăнĕ исленсе пиçет. Çийес умĕн пĕрер кашăк çу йарса пăтратан. Çепçемçе, сапсарă, пылакрах пăтă пулаť. Ађапђасем питĕ йуратса çийеççĕ.

## **Çĕрулми шаркку.**

Çĕрулмине ђĕрĕлле шуратса, лайăх çуса, ђĕлĕ ђĕлĕ касан. Йе сысна ашĕ, йе çулăраххине сурăх ашĕ илсе, салма пек туран. Унтан пăлашкана малтан пĕр-ик си çĕрулми, пĕрер си аш, унтан татах çĕрулми, татах аш хурса сисерен пĕђĕкçĕ тăвар сапса пыран. Унтан шыв йаран, шывне çийеле тухиђђенех йамасан та йураť. Пиçнĕ çĕре ашĕпе пĕрле пĕрер пуç сухан тураса йарсан та лайăх. Малтан вĕри кăмакана лартса вĕреме кўртен те, кăť маларах туртса лартан. Çинĕ çĕре, тăварланă хăйар пулсан пĕрле çиме кўртес пулаť.

# Ђустапа пӗҫермелли ҫимӗҫсем.

## Икерђӗ.

Ҫуртыри ҫӑнӑхне вӗтӗ алапа хатӗрлеҫҫӗ. Ҫӗпри лайӑхах пулмасан йӳҫӗтессе, йӳҫӗтмессе пӗлме пӗрер кашӑк ђей курки ҫине йарса, пӑртакҫӑ лӗп шыв йарса, пӗр-ик кашӑк ҫӑнӑх йарса, ӑшӑ ҫӗре витсе лартмалла. Апла хӑпармасан, вӑл ҫӗпрепе хурса ђустуна та сайа ан йар.

Ирхине пӗҫерме икерђе каҫах хума йурамаст̆. Нумай йӳҫнипе икерђи (пӗлӗмӗ) йӳҫӗ пулат̆, лайӑх хӑпарса та пиҫмест. Лайӑх ҫӗпрепе ҫутӑласпа лӑкаса лартсан та йӳҫсе хӑпарса ӗлкӗрет. Икерђӗ хума шывне каҫах кӑмакана лартса хурас пулат̆. Малтан лӗп шыв тӑван, унтан тӑварне, ҫӗприне йарса ирен. Ҫӑнӑхне пӗђӗкҫӗн йарса лӑкаса тӑран. Ҫӑнӑхӗ типӗ пулсан, шӗвӗрех хуран, ђӗрӗрех пулсан, ҫӑрарах хуран. Ђӗрӗ ҫӑнӑх йӳҫсе шӗвелсе кайат̆. Пӗҫерме тытӑниђђен ҫатмине лайӑх ҫуса ҫапҫутӑ тумалла. Унтан лайӑх хӗртсе ҫу сӗрмелле. Ҫу вырӑнне сысна ҫӑвӗ, йе така ҫӑвӗ сӗрсен те лайӑх. Ҫу сӗрнӗ ҫатма ҫине пысӑк кашӑкпа, йе ҫӑпалапа икерђӗ ђустине

ӑсса йаран та, сарӑлса ҫитсен ҫатмана вӗри кӑвар ҫине лартан. Кӑт хытса хӑйне хӑй йӑтакан пулсан, тепӗр май ҫаварса пӑрахан. Ҫатма ҫинђен хӗрелсен илсе, таса тӗкпе шӑратнӑ ҫу сӗрен. Ҫу ҫук пулсан хӑйма ҫине пуҫса ҫисен те лайӑх.

## Пӳремеђӗ (тӑпӑрђ пӳремеђђи).

Ҫуртӑри ҫӑнӑхне алласа йе турӑхпа, йе сӗтпе, йе шывпах ҫӑрсан та йурат. Лайӑх нӳрленсен ҫӳхе пашалу туса хатӗрлеҫҫӗ. Тӑпӑрђине малтан ала витӗр сӑтӑрса кӑлараҫҫӗ. Унтан тӑпӑрђӑ ҫине пӗрер ҫӑмарта шӑтарса, пӗр-ик кашӑк хӑйма йарса пӑтратаҫҫӗ. Вара ҫав тӑпӑрђа хатӗрлесе хунӑ пашалу ҫине сарса, хӗррисене тавӑрса картласа хураҫҫӗ. Унтан йе ҫатма ҫине, йе шӑвӑҫ листӑ ҫине ывӑс ҫинђен шутарса антараҫҫӗ те, ҫунса пӗтнӗ кӑмакана лартаҫҫӗ. Ҫийӗ хӗрелсе ђусти хытсан, пиҫнӗ пулат. Кӑларсан ҫу сӗрсе хураҫҫӗ.

## Ҫӗрулми пӳремеђђи.

Йӳҫӗ ђустана (ҫӑкӑр ђустинђен тусан та лайӑх пулат) пашалу пек йӗтӗрлесе, ӑшӑ ҫӗре ывӑспа лартса хӑпартаҫҫӗ. Хӑпарса ҫитсен

вĕри çатма çине хурса, çунакан вут умне кăвар çине лартса пĕçереççĕ. Çав вăхăтра ҫукунпа лартса ҫăмăрла çĕрулми пĕçереççĕ. Ăна шуратса, вĕриллех тӳсе, пĕр-ик кашăк хăйма, йе пĕрер кашăк çу йараççĕ. Пулсан пĕрер çăмарта шăтарса йаран, тăвар йаран. Лайăх хутăштарса, хайхи пиçсе сивĕннĕ кăвас капăртми (пашалăвĕ) çине саратăн. Çĕççе сĕт çине ҫике ҫике çине йакататăн та, çĕнĕрен çатма çине хурса кăмакана лартса илетĕн, Çĕрулмийĕ хĕреле пуçласан, кăларса çу сĕретĕн. Вăт сире ҫей ĕçме пӳремеҫĕ.

### Хура пит пӳремеҫҫи.

Ку та çав çатма пӳремеҫҫийех, анҫах çĕрулми пăтти çине хăйма-сĕт вырăнне типĕтнĕ кантăр вăрри тӳсе хутăштараççĕ. Типĕ пуласран пĕрер кашăк кантăр вăрри çăвĕ йарсан лайăх. Пĕçерме те çатма пӳремеҫҫи пĕçернĕ пекех пĕçереççĕ. Пиçсе тухсан çине каллех кантăр вăрри çăвĕ сĕреççĕ.

### Кукăљсем.

*Пиçнĕ çĕрулми кукăлĕ.* Çĕрулмийе пĕçерсе, шуратса, вĕриллех тĕвеççĕ. Ик-виç пуç сухан тураса, таса çатма çине çу йарса çав сухана

хурса кăвар çинҫе шарăлтаттарса вĕретсе илеççĕ. Унтан çав çĕрулми нимĕрĕ çине йарса хутăштараççĕ. Кукăљ ăшĕ хатĕр. Тулне йӳç ҫустаран та, тутлă ҫустаран та йурать. Ҫустине йĕтĕрлесе ывăс çине хураççĕ те, ăшне çур пашалу пекки çине сараççĕ. Тепĕр çуррипе хуплаштарса (çупса) хĕррисене пĕрле ҫĕпĕтсе, картласа тухаççĕ. Унтан ывăс çинҫен листă çине майĕпе шутарса антараççĕ. Ывăс çине çăнăхне тикĕс сапнă пулсан кукăљ çыпăçмасть, вăшт кăна листă çине шуса анать. Унтан кукăља йе турăх, йе сĕт сĕрсе, ик·виç çĕртен шăрпăкпа (спиҫкăпа) шăтарса, кăмакана лартаççĕ. Çийĕ-пиҫĕ хĕрелсен пиçнĕ пулать. Кăларсан татах питне çу сĕрсе хуран, вара çепçемçе пулать. Кăмакаран кăларсан кукăља ывăс çине илсе хумалла. Шăвăç листă çинҫе нумай тăрсан кукăљ тĕпĕ тарласа йĕпенсе кайать.

### Ҫĕрĕ çĕрулми кукăлĕ.

Çĕрулмине ҫĕрĕллех шуратса, çуса тасатса, пĕҫĕк валашкана (корытăна) йарса ťапкапа тĕвеççĕ. Çĕçĕпе лапша пек турасан та йурать. Ун çине каллех лапша пек тураса сысна аш

хутăштараççĕ. Пĕр пуç сухан тураса хутăштараççĕ, тăварне сапаççĕ. Вара паçăр каланă пек йе йӳç ђустаран, йе тутлă ђустаран тулне хатĕрлесе, каллех кукăљ çупса хураççĕ. Ку кукăља кăмакара ђылайрах тытмалла, сысна ашĕ лайăх пиçтĕр. Пиççе тухсан каллех çу сĕрсе çемçелме витсе хумалла.

### Пăри пăтти кукăлĕ.

Типĕ пăри пăтти пĕçереççĕ. Ун çине çатмапа типĕтнĕ кантăр вăрри тӳсе хутăштараççĕ. Кирлĕ таран тăвар сапаççĕ. Çапла каллех кукăљ туса пĕçереççĕ.

### Тутлă купăста кукăлĕ.

Пĕр вăтам пуç купăстана валашка, йе йăвăç ђашăк çинђе ťапкапа тĕвеççĕ. Лайăх вакలансан тăвар сапса тата тепĕр хут тĕвеççĕ. Тӳнĕ çĕртех купăста шывланса кайаť. Таса çатма çине çу сĕреççĕ те, çав купăстана лутăркаса, лайăх пăрса çатма çине хураççĕ. Пĕрер ђей курки сĕт йараççĕ те, кăмакана вĕри кăвар çине лартаççĕ. Çунасран пĕр-икĕ хут пăтратса йараççĕ. Унтан кăларса çатма çинђи купăстана йе ђашăкпа, йе турилккепе витсе хураççĕ. Вăл çапла хăйех çемçелет. Çав купăста

çине пĕр-ик ђĕрĕ çăмарта шăтарса йараççĕ, пĕрер кашăк йе çу, йе хăйма йараççĕ. Каллех кукăљ туса, малтан каланӑ пек турăх, йе сĕт сĕрсе кăмакана пиçме лартаççĕ. Ђĕрĕ çăмарта вырӑнне ик-виç çăмартана хытӑ пĕçерсе, вакçеççĕ тураса хутăштарсан та лайăх.

## Йӳç купăста кукăлĕ.

Йӳç купăстана çуса, пăрса, çатма çине йе хĕвелçаврӑнӑш, йе кантăр вăрри, йе ĕне çăвĕ йарса, ђашăлтаттараççĕ. Çавӑнтах ик-виç пуç сухан тураса йараççĕ. Вĕресе купăсти çемçелсен, кукăљ туса пĕçереççĕ.

## Кишĕр кукăлĕ.

Ђĕрĕ кишĕре çуса, ђукунпа шыв çинђе пĕçерсе шуратаççĕ. Пиçсен тирĕ хăйех сĕвĕнет. Тасалса пĕтсен ťапкапа тĕвеççĕ. Хытӑ пĕçерсе, вакçеççĕ тураса пĕр-ик çăмарта хутăштараççĕ. Пĕр-ик кашăк хăйма йараççĕ. Çу йарсан та йураť. Каллех кукăљ çупаççĕ.

## Йешĕл сухан кукăлĕ.

Пĕр йĕкĕр ывăç сухан касса кĕрсе, хађăпа тураççĕ. Ăна ђашăк çине йарса тăварпа хутăштараççĕ. Ик-виç çăмарта пĕçерсе тураса

йараççĕ. Пĕрер кашăк çу, ик-виç кашăк сĕт йарса лайăх йавăнтараççĕ. Татах кукăљ ăшĕ.

## Пăтăпа кăмпа кукăлĕ.

Типĕтнĕ кăмпана малтан шыв çине йарса хураççĕ. Унтан лĕп шывпа çуса тăкаççĕ. Вара сивĕ шыв çине йарса кăмакана пĕçерме лартаççĕ. Пиçсен вакçеççĕ тӳсе, тӳнĕ суханпа хутăштарса, хĕвелçаврăнăш çăвĕ йанă çатма çине хурса, кăвар çине лартса ђашăлтаттарас пулаť. Кайран типĕрех пиçнĕ хуратул пăттипе хутăштарса кукăљ туса хуран.

## Аш кукăлĕ.

Пĕçернĕ аша пĕр-ик кĕрепенкене йахăн илсе, ȣалашка (корыта) çине йарса ťапкапа вакçеççĕ пулиђђен тĕвеççĕ. 10—12 пуç сухан шуратса тĕвеççĕ. Çатма çине çулă шӳрпе йарса çав сухана кăвар çинђе ђашăлтаттарса илеççĕ. Унтан çав тӳнĕ ашпа хутăштараççĕ. Тăвар сапаççĕ, пăрăç йараççĕ. Тата виç-тăват кашăк çулă шӳрпе йараççĕ. Кукăљ ăшĕ пулђĕ. Аш кукăлне тусан, кăмакана лартиђђен кукăљ тулне варринђен шăтарас пулаť. Шăтармасан кăмакара айалти питне шăтарса тутлă

сĕтекĕ листă çине йухса тухаĭ. Кукăљăн ăшĕ типпе йулнипе техĕмсĕр пулаĭ. Пиçсе тухсан кукăљ çемçелиђђен варринђи шăтăкĕнђен пĕр-ик кашăк шÿрпе йарса, кукăлне тĕрлĕ йенне ђалăшгарас пулаĭ. Унтан питне çу сĕрсе çемçелме хурас пулаĭ. Аш кукăлне пиђĕ çемçелсенех вĕрилле çиме лайăх.

Ăшђик, упке-пĕвер кукăлне те çавăн пекех пĕçереççĕ.

## Пулккă мĕнле пĕçереççĕ?

Пулкка тулă çăнăхĕнђен анђах пĕçерме пулаĭ. Çĕпри килти сăра çĕпри пулсан, ăна пĕрер кашăк ђуста хурас лĕп шыв çине йараççĕ те, тăрăласса кĕтеççĕ. Тăрри çине, тĕпне йамасăр, пулккă ваљђи ђуста хураççĕ. Килти çĕпрен тĕпĕ ђустан тĕсне пăсаĭ. Малтан çав шыв çине çăнăх йарса икерђĕ лăканă пек каçах лăкаса, ăшăрах çĕре çыхса лартаççĕ. Ирпе тăрсан йÿçнипе йÿçменнине кăпăкланнинђен пĕлеççĕ. Лайăх йÿçнĕ ђуста кăпăклă пулаĭ. Çăрас умĕн çителĕклĕ тăварне йараççĕ, пĕр-ик кашăк çу ирĕлтерсе йараççĕ. Пĕрер кашăк вак сахăр йараççĕ, пĕрер çăмарта шăтарса йараççĕ. Пурте лайăх хутшăнђăр тесе,

ђустана калекпе лайăх пăтратаççĕ. Унтан алăсене лайăх çуса çăраççĕ. Çăрасса хытă çăрмаççĕ. Çăрасса ђусти алă çумне сыпăçми пулиђђен çăраççĕ. Вара витсе ăшă çĕре хăпарма лартаççĕ. Ђустине хунă ђухне шыв вырăнне ăшă сĕт çине хурсан, çу йамасан та питĕ кăпăш ђуста пулаť. Ђуста хăпарса çитсен кăмакана ђĕртсе йаран та, пулккăсем тума тытăнан. Ђустана илсе ывăс çине хулăн унађă пек тăван та, çĕçĕпе пĕр пек каса-каса илсе пулккă йăвалан. Йăваланă пулкка çу сĕрнĕ таса листă çине икĕ пӳрне хулăнăш йăвала йăвала, хушшисене виçшер пӳрне ђухлĕ хăварса лартса тухан. Унтан таса çĕтĕкпе витсе, кăмака çине ăшă çĕре хăпарма лартан. Кăмака çунса пĕтеспе пăхан. Хăпарса сарăлса çитнĕ пулсан, илсе сулхăнрах çĕре лартан. Хăпарса çитеймен пулсан ăшăрах çĕре тĕртен. Кăмака çунса пĕтсе кăварне кăларсан пулккăсене тата тĕкпе йе сĕт, йе турăх сĕрсе, кăмакана лартан. Йушкăсене хупма ан васка. Кăмакана тăтăшах уçкаласа пăх. Сахăрлă, çулă ђуста ђас çунаť. Пулккăсем лайăх хĕрелсе çитсен, кăмакаран кăларса, ывăс çине илсе витсе хур.

### Ҫуллахи шăрăхсенҭе ҫимелли сивĕ шӳрпе.

Ҫын пуҫне икшер стаккан кăвас илеҫҫĕ. Симĕс сухана тураса йăвăҫ ҭашăк ҫинҭе тăварпа тĕвеҫҫĕ. Ун ҫине пĕр ик хытă пиҫнĕ ҫăмарта тураса йараҫҫĕ. Ик-виҫ хăйар тураса йараҫҫĕ. Пиҫнĕ сивĕ ҫĕрулми тураса йарсан та пырaтĕ. Унтан ҫавна пурне те кăвасĕпе хутăштараҫҫĕ те, пĕр-ик кашăк йуҫĕ хăйма кӳртсе йараҫҫĕ. Ҫапла сĕтеклĕ, техĕмлĕ сивĕ шӳрпе пулаҭ.

### Сивĕ типĕ апат.

Пĕр пуҫ тăварланă купăста, виҫ-тăват хăйар тураҫҫĕ пулсан, помиторне та тураса йараҫҫĕ. 4—5 пиҫнĕ сивĕ ҫĕрулми тураса йараҫҫĕ. Пĕр-ик пуҫ сухан тураса хутăштараҫҫĕ. Ҫийелтен пĕр-ик кашăк хĕвелҫаврăнăш, йе кантăр ҫăвĕ сапаҫҫĕ. Уҫă, сивĕ апат пулаҭ.

### Ҫамрăк аҭасене ҫитермелли апат-ҫимĕҫ.

Епĕр, ҭăваш хĕрарăмĕсем, ҫамрăк аҭасене хăйсем ҭăмласа ҫăтма вĕрениҭҭенех, хамăр ҫийекен апат-ҫимĕҫе пама тăрăшатпăр. Тата йумăҫ карҭăксем аҭа ҫуралсанах ҫăкăрпа кантăр вăрри ҫăвĕ ҭăмласа ĕмкĕҭ туса пама

хушаççĕ. Пӳсĕр çулăхмасть, теççĕ. Вăл ытлах та ухмахла хăтланни ĕнтĕ. Тин çуралнă аҫана çăкăр мар, амăшĕ сĕтĕнҫен пуçне нимĕнле сĕт те пама йурамасть. Йумăç карҫăксен хыççăн кайса ҫылай аҫасен ăшне çуралсанах пăсаççĕ. Çамрăк аҫана ултă уйăхран пуçласа тин, амăшĕн сĕҫĕ çитми пулсан, çитерме йурать. Унта та хамăр çийекен апат-çимĕçе çитерме йурамасть. Çавна пĕлмен пирки пирĕн çамрăк аҫапҫасем кĕрхи шăнасем пек вилсе пĕтеççĕ те.

5 уйăхран пуçласа аҫасене акă мĕн-мĕн çитерме йурать. Ҫи малтан çиме вĕрентнĕ ҫухне пулккă таткине вĕрекен шывпа ислетсе, пĕрер ҫей кашăкки вак сахăр йарса сивĕтсе çитермелле. Анҫах çитернĕ ҫухне çитерекенĕ аҫа кашăкне хăй çăварне хыпма йурамасть. Аҫа çăварĕ пăсăлать.

Малалла пулккине ислетме шыв вырăнне вĕренĕ сĕт йарсан та йурать. Сухарирен пăтă туса çитерсен те лайăх. Малтан пĕҫĕкçĕ ҫӳлмек çине сĕт, сĕт пулмасан шыв йарса вĕреттеççĕ. Ун çине пĕрер кашăк сахăр йараççĕ. Кĕрпе вырăнне сухари ватса йараççĕ. Сарăлса шĕвĕ пăтă пулсан аҫана çитереççĕ.

## Тĕрлĕ кĕрпесенҫен пĕçернĕ пăтă.

6 уйăх иртнĕ аҫа ваҫҫи маннă кĕрпинҫен, рис кĕрпинҫен, сĕлĕ кĕрпинҫен, вир кĕрпинҫен пăтă пĕçерсе çитерме йурат. Пăттисене шывпа та, сĕтпе те пĕçерме йурат. Анҫах лайăх пăтратса пĕçермелле. Ҫăмăрккаллă пăтă аҫана йурамаст. Шывпа пĕçернĕ ҫух пăртакçă тăвар, кăт çу йарас пулат. Сĕтпе пĕçернĕ ҫух пĕрер кашăк сахăр йарас пулат.

Пĕр стаккан сĕт пуçне, вĕреме кĕрсен, пĕр кашăк сахăр, пĕр кашăк кĕрпе йамалла. Кĕрпине йанă ҫухне лайăх пăтратса ҫамалла. 10 минутра пăтă пиçет. Нимĕнле пăтта та аҫана вĕрилле çитерме йурамаст.

## Рис пăтти.

Икĕ кашăк риса малтанах йĕпетсе хураççĕ. Стаккан çурă сĕт вĕретеççĕ. Ун çине çав йĕпетнĕ риса йамалла, пĕр ҫей кашăкки сахăр, пĕр кашăк услам çу йамалла. Лайăх пăтратса рисĕ сарăлиҫҫен майĕпе вĕретмелле.

Йулнă пăтта аҫасене тепĕре çитерме йурамаст, мĕшĕн тесен пылак пăтă ҫас пăсăлат. Ытти кĕрпесенҫен те çавнашкалах пĕçереççĕ.

7—8 уйӑха ҫитнӗ аҫасене пахҫа ҫимӗҫӗсене (кишӗр, ҫарӑк, тутлӑкӑшман, ҫӗкӗнтӗр) пӗҫерсе пама йурать. Вӗсене малтан шуратса, шултӑра тураса, ҫемҫелиҫҫен пӗҫерес пулать. Унтан таса ала витӗр кашӑкпа пусса сӑтӑра сӑтӑра кӑларса, вак сахӑр сапса ҫитермелле, пӗҫӗксӗ ҫу йарсан та пӑсмасть.

## Ҫӗрулми шӳрпи.

Ҫӑмӑрла пӗҫернӗ ҫӗрулмийе вӗриллех ала витӗр кӑларса, пӑртакҫӑ тӑвар йарса, услам ҫу йарса пӑтратас пулать. Унтан вӗренӗ сӗт йарса, ҫӑра хӑйма пек пулиҫҫен вӗретес пулать.

Панулми, ҫырла таврашне те аҫасене пӗҫерсе, пӑртакҫӑ сахӑр сапса ҫитерес пулать. Пыра киле аҫасене хамӑр ҫийекен шӳрпесене те сыптарма йурать.

Ҫакӑнта каланӑ апат-ҫимӗҫсене пӗҫерес тесен, савӑт-сапи те ҫителӗклӗ кирлӗ. Пӗр ҫатмапа та, пӗр хуранпа тӗрлӗрен апат-ҫимӗҫ пӗҫерейес ҫук. Сахалтан та пӗр-ик ҫукун, пӗр-ик ҫӳлмек, пӑлашка кирлӗ. Сахалтан та пӗр-ик шӑвӑҫ листӑ, купӑста-сухан тӳме валашкипе ҫапки кирлӗ. Валашкине харпӑр хӑй арҫынӗ те ҫавса тума пултарать. Ывӑсӗпе

йĕтĕрĕ, ҫуста хума ҫӳлмекĕ, ухваҫĕпе ҫатма аврийĕ хăйсене кура пурте кирлĕ. Ҫав сават-сапасем пулмасан, хĕрарăм кăмака умĕнҫе алăсăрпа пĕрех. Сават-сапана тыткалана хыҫҫăн вĕри шывпа ҫуса типĕтме хурас пулать. Таса мар сават-сапа апат-ҫимĕҫĕн техĕмне ҫухатать.

Типнĕ сават-сапана ӳпĕнтерсе хумалла. Лартса хурсан тусан пусать.

Хакĕ 20 пус